памалли ҫинчен калакан положени проектне ҫырса хатӗрлет. Ҫав проекта 1870 ҫулхи мартӑн 26-мӗшӗнче правительство ҫирӗплетнӗ. Положени чӑваш, мари, удмурт, ҫавӑн пекех Ҫӗпӗрти, Вӑтам Азири халӑхсен шкулӗсенче ачасене тӑван чӗлхепе вӗрентме ирӗк панӑ.

XIX ӗмӗрӗн 60—70 ҫулӗсенче Атӑл тӑрӑхӗнчи вырӑс мар халӑхсене ҫутта кӑларас тӗлӗшпе уйрӑмах Хусан университечӗн профессорӗ Н. И. Ильминскипе Н. И. Золотницкий нумай тӑрӑшса ӗҫленине палӑртмалла. Часах вӗсем Атӑл тӑрӑхӗнчи вырӑс мар халӑхсен чӗлхине юрӑхлӑ ҫырулӑх тӑвас юхӑма пуҫарса янӑ.

Ҫамрӑк И. Яковлев 1864 ҫултах, Атӑл тӑрӑхӗнчи кӗпернесенче ҫӗр виҫсе ҫӳренӗ вӑхӑтра, тӑван халӑх валли ҫырулӑх тӑвасси ҫинчен ӗмӗтленнӗ. Унӑн асаилӗвӗсенче ҫапла йӗркесем пур: «1864 ҫулта эпӗ Сызрань уесӗнчи Винновка салинче ӗҫлеттӗм. Эпӗ кунта хытӑ чирлесе ӳкрӗм, вилес патнех ҫитнӗччӗ ӗнтӗ. Сасартӑк салана пар лашапа Долгорукова княгиня имемнийӗн управляющийӗ О. Косинский поляк пырса ҫитрӗ. Ҫӗр виҫекен ҫын кирлӗ пулнӑран тӳрех вӑл ман пата пычӗ. Эп чирлине курсан, мана хӑйпе пӗрлех княгиня именине илсе кайрӗ. Килте Косинскисем полякла калаҫатчӗҫ, вулатчӗҫ. Кунта эпӗ поляксен те хӑйсен ҫырулӑхӗ пурри ҫинчен пуҫласа илтрӗм. Мана, хам чӑваш пулнӑ май, тӑван чӗлхепе ҫырнӑ кӗнекесем ҫукки хытӑ пӑшӑрхантарчӗ».

Чӗмпӗр гимназийӗн 5-мӗш класӗнче вӗреннӗ чухнех вунтӑхӑр ҫулхи И. Я Яковлев чӑваш чӗлхине тӗпчекен Н. И. Золотницкин 1867 ҫулта пичетленсе тухнӑ «Сьолдалык кнеге» пирки ҫырнӑ рецензире ҫапла каланӑ: «Аслӑ ҫулсенчен тата вырӑссенчен аякра пурӑннӑ май, Хусанпа пирӗн кӗпӗрнери (Чӗмпӗр кӗпӗрни. — А. А), Кӑрмӑшпа Пӑва уесӗнчи чӑвашсем вырӑс чӗлхипе ҫывӑх паллашаймаҫҫӗ. Ҫавӑнпа та чӑваш ҫыннине вырӑсла ҫырнӑ кӗнекесем мар, «Сьолдалык кнеге» пек чӑвашла ҫырнӑ кӗнекесем ытларах усӑ кӳме пултараҫҫӗ. Юлашкинчен эпӗ тата господин авторӑн чӑваш чӗлхинчи сасӑсене вырӑс чӗлхи саспаллийӗсемпе палӑртас мелӗ пирки пӗр-ик сӑмах каласшӑн. Чӑваш чӗлхинчи пур сасӑсене те вырӑс чӗлхи саспаллийӗсемпе палӑртма май килмест. Ҫавӑнпа та эпӗ чӑваш чӗлхинчи хӑшпӗр сасӑсене палӑртма уйрӑм ҫӗнӗ саспаллисем кирлӗ тесе шутлатӑп. Чӑнах та, господин автор кӗнекере хӑш-пӗр паллӑсемпе усӑ курать, анчах вӑл ҫав паллӑсем мӗне пӗлтернине ӑнлантарса памасть. Ҫавӑнпа та вӗсен пӗлтерӗшне чӑваш ҫынни тӳрех тавҫӑрса илеймест», — тенӗ.

1868 ҫулта И. Я. Яковлев Чӗмпӗр хулинче хӑй шучӗпе чӑваш шкулӗ уҫнӑ. Ҫак ӗҫре ӑна малтан хула гимназийӗн директорӗ И. В. Вишневский тата 1869 ҫулта Чулхуларан Чӗмпӗре куҫса килнӗ И. Н. Ульянов инспектор нумай пулӑшнӑ.

1870-1875 ҫулсенче И. Я. Яковлев Хусан университетӗнче вӗреннӗ. 1870 ҫулхи пӗр кӗрхи кун вӑл Хусан университетӗнче арабпа тутар чӗлхисем вӗрентекен Н. И. Ильминский профессорпа ҫывӑх паллашать. Николай Иванович чӑвашсем валли ҫӗнӗ ҫырулӑх тӑвасси ҫинчен сӑмах пуҫарать. Ҫамрӑк Иван Яковлев студентӑн шухӑш-ӗмӗтне ырласа, профессор ӑна пулӑшма килӗшет. XVIII ӗмӗр вӗҫӗпе XIX ӗмӗрӗн пӗррремӗш ҫурринче пичетленсе тухнӑ чӑваш кӗнекисене тӗплӗн тишкерсе тухнӑ хыҫҫӑн Н. И. Ильминскипе И. Яковлев малтанхи тӑлмачсем, ҫавӑн пекех Хусан вӗренӳ округӗнчи чӑваш шкулӗсен инспекторӗ пулнӑ Н. И. Золотницкий те чӑваш чӗлхин тӗп законӗсене ҫителӗклӗ таран тӗрӗс пӗлменни тата вӗсен пӗтӗм чӑваш халӑхне тивӗҫтермелле литература чӗлхи тӑвас идейипе принципӗ йӑнӑш пулнине асӑрханӑ.

Н. И. Ильминский профессор И. Я. Яковлева чи малтанах чӑвашсен калаҫу чӗлхине сӑнама, унти сасӑсен шучӗпе пахалӑхне тӗрӗс палӑртакан алфавит тумалли ҫинчен вӗрентнӗ. И. Яковлев ҫак пысӑк ӗҫе чи малтан университетра историпе филологи факультечӗн арабпа тутар чӗлхисен уйрӑмӗнче вӗренекен В. А. Белилин вырӑса, тӗне кӗнӗ тутар ачисен Хусан шкулӗнче вӗренекен С. Н. Тимрясов чӑваша, Чӗмпӗр чӑваш шкулӗнче ӗҫлекен А. В. Рекеева, Пӑва уесӗнчи Пимӗрсел шкулӗнче ӗҫлекен Т. П. Петров учителе, Пӑва уесӗнчи Кӑнна Кушни ялӗнчи И. И. Иванов учителе, Ҫӗрпӳ уесӗнчи Ямаш ялӗнчен учительсем хатӗрлекен Хусан семинарине вӗренме пынӑ Д. ф. Филимонов чӑваша явӑҫтарнӑ, пӗрле пухӑнса, тӗпчев-сӑнав ирттернӗ.

Чӑваш ҫырулӑхне тума ҫӑмӑлах пулман. Чи малтанах чӑваш чӗлхинчи сасӑсен шучӗпе пахалӑхне тӗпчесе пӗлмелле, вӗсене палӑртмалли саспаллисен йӗркине (алфавитне) тумалла. Ҫавсене тума чи малтан, тимлӗн сӑнаса, чӗлхери сасӑсем пуплевре хӑҫан мӗнле илтӗннине пӗлмелле, унтан тата вӗсене ҫырура палӑртмалли саспаллисем пирки те шухӑшламалла пулнӑ-ха.

Сӑмах май каласан, И. Я. Яковлевӑн ҫырулӑх тӑвас тӗлӗшпе ӗҫлекен ушкӑнӗнчи ҫамрӑксем кашниех, хӑйсен тӑван чӗлхине пӗлнисӗр пуҫне, тата темиҫе ют чӗлхе пӗлнӗ. И. Я. Яковлев хӑй те, чӑвашла, вырӑсла пӗлнисӗр пуҫне, тутарла та лайӑх пӗлнӗ, калаҫнӑ.

Вырӑс пулнӑ май, В. Белинин чӑваш чӗлхинчи сасӑсен шутне, вӗсен пахалӑх паллисене, хӑвӑртах уйӑрса илме, тӗрӗс палӑртма пултарнӑ. Н. И. Ильминскипе И. Я. Яковлев аса илнӗ тӑрӑх, вӑл чӗлхе ӑслӑлӑхне аван чухлакан ӗҫчен студент пулнӑ.

Чӑваш чӗлхи алфавичӗн малтанхи варианчӗсене тунӑ вӑхӑта аса илсе, 1884 ҫулта Н. И. Ильминский профессор ҫапла ҫырнӑ: «Манӑн Василий Алексеевич Белилин ятлӑ студент пурччӗ. Ҫак нумай пӗлме тӑрӑшакан ӗҫчен ҫамрӑк арабпа тутар чӗлхисем вӗренетчӗ. И. Яковлев мана тата В. Белилинпа паллашнӑ хыҫҫӑн, тутарпа чӑваш чӗлхисем пӗр-пӗрне ҫывӑх пулнине асра тытса эпӗ ӑна чӑваш чӗлхине сӑнаса вӗренме сӗнтӗм. Ҫав тӗллевпех И. Яковлевпа В. А. Белилина тӗне кӗнӗ тутар ачисен Хусан шкулӗнче вӗренекен Сергей Тимрясов чӑвашпа паллаштартӑм. Вӑл тутарла та, чӑвашла та аван пӗлетчӗ. С. Н. Тимрясов сасӑпа чӑвашла вуланӑ текста В. А. Белилин вырӑс чӗлхи алфавитӗнчи саспаллисемпех, чухӑмӑн чӑвашлах ҫыратчӗ. Вӗсем ҫапла ӗҫлесе, вырӑсларан тутарла куҫарнӑ тӗн кӗнекисене пӗр-ик эрне хушшинче пӗтӗмпех чӑвашла куҫарса пӗтерчӗҫ. Ҫав куҫарусем вара 1871 ҫулхи ҫуллахи каникулччене алӑ тивмесӗр выртрӗҫ. Каникул ҫитсен, И. Яковлев В. Белилинпа С. Тимрясова иккӗшне те хӑй ҫуралса ӳснӗ Кӑнна Кушкине, унтан Чӗмпӗрти чӑваш шкулне илсе кайрӗ. Кунта вӗсем В. А. Белилинӑн чӑвашла ҫырнӑ тетрачӗсене, вӗренекенсемпе пӗрле вуласа, итлесе сӳтсе яврӗҫ. Чӑнах, малтан унӑн ҫырӑвӗнче ҫирӗп йӗркех пулман. Ҫавӑнпа та вӗсем умне: «Чӑваш чӗлхинчи сасӗсене палӑртнӑ чух вырӑс чӗлхи алфавитӗнчи саспаллисемпе мӗнле усӑ курмалла? Малашне тата мӗн тумалла?» — ыйтусем тухса тӑнӑ. Хӑйсен ӗҫӗ ҫинчен ялан манпа канашларӗҫ. Унтан тата вӗсем час-часах Хусан тӗн академийӗнче ӗҫлекен Г. С. Саблуков профессорпа калаҫатчӗҫ.

Малтан вӗсем чӑваш чӗлхинчи кашни хупӑ сасӑн ҫемҫелӗхне палӑртма тесе фини ученӑйӗсем хӑйсен тӗпчевӗсенче усӑ куракан кӗске вертикаллӗ штрих евӗрлӗ паллӑсем лартса тухнӑччӗ. Ҫурма усӑ сасӑсене (хальхи ӑ, ӗ сасӑсене. — А. А) авалхи славян чӗлхинчи ъ ь саспаллисемпе палӑртатчӗҫ. Ҫапла ӗҫлесе, вӗсем букварь пичетлесе кӑларчӗҫ. Ҫав букварьпе шкул практикинче усӑ курма, чӑнах та, йывӑрччӗ ӗнтӗ. Кӗнекене типографире пичетленӗ чух леш вертикаллӗ штрих паллӑсем час-часах хуҫӑлса аптратрӗҫ, ҫырнӑ чух та вӗсем самаях кансӗрлетчӗҫ. Ҫитменнине тата вырӑс чӗлхинчи ъ, ь саспаллисене сӑмах вӗҫӗнче ҫеҫ ҫырма хӑнӑхнӑ хӑшпӗр вырӑс священниксем И. Я. Яковлев букварӗнче ҫав саспаллисем сӑмах пуҫламӑшӗнче те, варринче те, вӗҫӗнче те пулнине курсан, хытах тарӑхатчӗҫ. Каярахри кӑларӑмӗсенче И. Яковлев ъ , ь саспаллисене ӑ, ӗ саспаллисемпе улӑштарчӗ.»

Ҫырулӑх — чи малтан ҫыруллӑ культура никӗсӗ. Чӑнах та, И. Я. Яковлевпа унӑн ӗҫтешӗсене чӑваш чӗлхин пурне те тивӗҫтерекен ҫӗнӗ алфавитне тума ҫӑмӑлах пулман. Пӗтӗм чӑваш халӑхне ӑнланмалла, ҫырма ансат та ҫӑмӑл ҫырулӑх тӑвас тесе, хастар ҫамрӑксем тӑрӑшса ӗҫленӗ: 1871—1873 ҫулсенче вӗсем чӑваш чӗлхи алфавичӗн виҫӗ тӗрлӗ вариантне туса, вӗсене шкул практикинче сӑнаса пӑхнӑ, чи ӑнӑҫлине ҫырура усӑ курма йышӑннӑ.

1871-1873 ҫулсенчи ҫуллахи каникул вӑхӑтӗнче И. Я. Яковлев хӑйӗн юлташӗсене Кӑнна Кушкипе кӳршӗри чӑваш ялӗсене виҫӗ хутчен экспедицие илсе кайнӑ. Ялти хресченсене пухса, вӗсен калаҫӑвне тимленӗ, малтанхи букварьсем валли халӑх сӑмахлӑхӗн лайӑх тӗслӗхӗсене ҫыра-ҫыра илнӗ, вӗсен конструкцийӗ, унта шухӑш мӗнле йӗркеленнине, сӑмахсен пуплеври вырӑнне, сасӑсен хытӑлӑхпа ҫемҫелӗх паллисене сӑнанӑ, тӗпченӗ, пӗтӗм чӑваш халӑхне юрӗхлӑ ҫырулӑх тӑвас тесе ырми-канми ӗҫленӗ.

Чӑваш чӗлхинчи сасӑсен хисепне тӗрӗс палӑртас тесе, малтанхи вӑхӑтра уйрӑмах В. А. Белилин студент тӑрӑшса ӗҫленӗ. Каярахпа вара ҫак ӗҫе И. Я. Яковлев тата С. Н. Тимрясова, А. В. Рекеева, И. И. Иванова, Т. П. Петрова, Д. ф. Филимонова хутшӑнтарнӑ. Вӗсем сӑнавсем тӑва-тӑва чӑваш чӗлхинчи хытӑ тата ҫемҫе хупӑ сасӑсем кӗске усӑ сасӑсем ӑ, ӗ пуррине асӑрханӑ. Ҫапла тӑрӑшса ӗҫленӗ май, вӗсем чӑваш чӗлхинчи 9 усӑ сасӑ ъ (хальхи ӑ вырӑнне), ь (хальхи ӗ вырӑнне) а, е, и, о, у, ы, ӳ, тата 38 хытӑ хупӑ сасӑпа ҫемҫе хупӑ сасӑ — пӗтӗмпе 47 тӗрлӗ сасӑ пуррине палӑртнӑ.

Ҫакӑнпа И. Яковлевпа унӑн вӗрентекенӗсем чӑваш чӗлхин ҫӗнӗ алфавитне йӗркелес тесе ир-

щисен инспекторĕ патне янă çырура çапла çырнă: «При этом считаю долгом присовокупить, что Тимрясов состоял учителем в Симбирской чувашской школе с 1 августа 1877 г. по 1880 год и во все время был усерден к исполнению своей обязанности, отличного поведения».

С. Н. Тимрясов хăй вăхăтĕнче чăваш халăх этнографийĕпе те интересленнĕ. 1875 çулта «Известия по Казанской епархии» журналăн 9-мĕш номĕрĕнче унăн «Похороны и поминки чуваш-язычников в дер. Ишалькиной Чистопольского уезда» ятлă интереслĕ статйи пичетленсе тухнă. С. Н. Тимрясов мĕн виличченех И. Я. Яковлевпа туслă та ĕçлĕ çыхăну тытса тăнă.

Алексей Васильевич РЕКЕЕВ — И. Я. Яковлев — пĕрремĕш вĕренекенĕ, чи çывăх пулăшаканĕсенчен пĕри. Вăл та 1848 çулта Кăнна Кушкинче, удельни хресчен çемйинче çуралнă. 1869—1872 çулсенче И. Я. Яковлев пулăшнипе Чĕмпĕр хула училищинче вĕреннĕ. И. Я. Яковлев Хусан университетĕнче вĕреннĕ çулсенче вăл Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче ачасене вĕрентнĕ, И. Н. Ульяновпа туслă пулнă. Çĕнĕ чăваш çырулăхне тунă тапхăрта А. В. Рекеев Анат Тимĕрçен чăваш шкулĕнче (халĕ Ульяновск облаçĕ, Чăнлă районĕ. — А. А.) вĕрентнĕ, кунтах малтанхи букварьсен пахалăхне сăнаса тĕрĕсленĕ. 1874—1882 çулсенче вăл Хусанта учительсем хатĕрлекен семинарире чăваш ачисене вĕрентсе пурăннă. 1882 çулта А. В. Рекеев Теччĕ уесĕнчи Кивĕ Эйпеçри (халĕ Чăваш Республикинчи Елчĕк районĕ. — А. А.) чиркÿре ĕçленĕ, шкулта вĕрентнĕ. Кунта вăл пĕр уцлăнмасăрах 35 çул хушши, пенсие тухиччен (1917 ç.) ĕçленĕ. А. В. Рекеев — И. Я. Яковлевăн паллă ĕçтешĕ. Вăл мĕн виличченех, И. Я. Яковлев пекех, чăваш халăхне çутта кăларассишĕн, унăн культурине ÿстерессишĕн ĕçлесе пурăннă.

И. Я. Яковлев А. В. Рекеев хушшинчи туслă та ĕçлĕ çыхăнусен пĕлтерĕшĕ çыруллă чăваш культурин историйĕнче пысăк пĕлтерĕшлĕ йĕр хăварнă: вăл уйрăмах вырăсла тĕн содержанилле литературăна чăвашла куçарма нумай вăй хунă. Ку вăл, паллах, чăваш литература чĕлхине аталантарас тесе тунă пархатарлă ĕç пулнă. Куçарнă евангели кĕнекисен пахалăхне тĕрĕслесе пăхас тесе, 1899 çулта А. В. Рекеев Хусан кĕпернинчи чăвашсем пурăнакан пур уессенче те пулнă: тури диалект çыннисене пухса, хăйĕн куçарăвĕсене вуласа кăтартнă, сÿтсе явнă, вĕсен чĕлхипе стильне витĕмлĕрех тăвас тесе тăрăшнă.

Игнатий Иванович ИВАНОВ — 1848 çулта хальхи Тутар республикинчи Кăнна Кукши ялĕнче удельни хресчен çемйинче çуралнă. 1856 çулта вăл И. Я. Яковлевпа пĕрле удельни шкулне вĕренме кĕнĕ, унта вăл та И. Яковлевпа пĕрлех çĕр виçекенсен Чĕмпĕр шкулĕнче вĕреннĕ, анчах, ашшĕ ÿкĕтленине пула, унта, вĕренме пăрахса, каллех яла таврăнма тивнĕ. Вара 1870 çулсенчех кунта хресчен ĕçĕпе пурăннă. 1870 çулта И. Я. Яковлев чĕнсе илнипе И. И. Иванов Хусана Н. И. Ильминский уçнă тĕне кĕнĕ тутар ачисен шкулĕн ĕçĕ-хĕлĕпе паллашать, учитель пулма хатĕрленет. 1871—1875 çулсенче Кăнна Кукшинчи шкулта ĕçлесе пурăнать. 1871 çулта И. Н. Ульяновпа пĕрле тăван ялĕнче шкул уçма, унăн çĕнĕ çуртне лартма хастар хутшăнать.

1876 çулта И. И. Иванов учительсем хатĕрлекен Хусан семинарийĕнче учитель ятне илме экзамена хатĕрленнĕ, анчах та учителе тухаймасăрах Теччĕ уесĕнчи шкулсенче ĕçленĕ.

Тăван ялта ĕçленĕ вăхăтра И. И. Иванов пурнăçа сăнлакан йăла калавĕсем çырнă. Унăн калавĕсенчен паллăраххисем: «Çынна мулшăн туман, мула çыншăн тунă», «Çынна епле тăвăн, ху та çавна курăн», «Çынна усал тăвакан хăй те усал курать» т. ыт те. И. И. Иванов пурĕ 14 калав çырнă. Вĕсенче вăл чăваш халăх пурнăçĕнчи, йăла-йĕркери çитменлĕхсене питлет. Унăн икĕ калавĕ хăй вилнĕ хыççăн 1900 çулта Чĕмпĕрте тухнă «Чăваш букварĕнче» пичетленнĕ, ыттисем ку таранччен алçыру халлĕн упранаççĕ. И. И. Иванов 1885 çулта тăван ялĕнче вилнĕ.

Тимофей Петрович ПЕТРОВ — Пăва уесĕнчи Пимĕрсел ялĕнчи хресчен çемйинче çуралнă. Тăван ялĕнчи шкултан вĕренсе тухсан, Т. П. Петров унтах ĕçлеме тытăннă. Вăл çĕнĕ çырулăх тăвакансене, укса-тенкĕ парса хастар пулăшнă. Пăва уесĕнчи чăвашсен чĕлхине сăнама пынă И. Я. Яковлевпа В. А. Белилина халăх сăмахлăхĕн паха тĕслĕхĕсене пухса панă, чăваш чĕлхинчи сасăсем пирки хăй мĕн сăнаса пĕлнине пĕлтерсе тăнă. 1873 çулхи октябрьте учительсем хатĕрлекен Хусан семинарийĕнче вăл Н. И. Ильминскипе И. Я. Яковлев тăрăшнипе халăх училищисенче ĕçлекен учитель ятне илме экзамен тытнă. Хусан вĕренÿ округĕ сĕннипе ăна часах Самар кĕпĕрнинчи Пĕкĕлме уесĕнчи Тилечер ятлă чăваш ялне янă.

И. Я. Яковлев 1873 çулхи октябрĕн 18-мĕшĕнче А. В. Рекеев патне янă пĕр çырăвĕнче Т. П. Петров çинчен çапла çырнă: «Ĕнтĕ пирĕн инçетри чăвашсемшĕн тăрăшакан тата пĕр çын пулчĕ, Тимофей Петрович чăвашла пит лайăххах пĕлмест пулин те — хамăр çын, кирлĕ пулсан, ун патне пулăшма чăвашла авантарах пĕлекен тепĕр ача яма та юрать», — тенĕ.

Т. П. Петров учителĕн ĕмĕрĕ вăрăм пулман, вăл 1875 çулхи октябрĕн 9-мĕшĕнче Самар облаçĕнчи Чаллăпуç районне кĕрекен Тилечер ялĕнче çĕре кĕнĕ.

Данил Филимонович ФИЛИМОНОВ 1855 çулта Хусан кĕпĕрнинчи Çĕрпÿ уесне кĕрекен Ямаш ялĕнче (халĕ Чăваш Республикин Çĕрпÿ районĕ) чухăн хресчен çемйинче çуралнă. Чурачăкри земство шкулĕнчен вĕренсе тухсан, Етĕрне уесĕнчи Хапăсри (халĕ Вăрнар районĕ) икĕ класслă шкулта вĕреннĕ.

Нумай пĕлме тăрăшакан малаш ĕмĕтлĕ вунçичĕ çулхи çамрăк 1872 çулта вырăс мар халăх шкулĕсем валли учительсем хатĕрлекен Хусан семинарийĕн чăваш уйрăмне вĕренме кĕнĕ. Кунта вăл семинари директорĕпе — Н. И. Ильминский профессорпа, Хусан университетчĕн иккĕмĕш курсĕнче вĕренекен И. Я. Яковлев студентпа тата унпа пĕрле çырулăх тума хутшăннă юлташĕсемпе паллашнă. Вĕсемпе пĕрле Д. Ф. Филимонов та малтанхи чăвашла букварьсен алçырăвĕсене хатĕрлеме хутшăннă. Семинарирен вĕренсе тухсан, 1876—1882 çулсенче Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче историпе географи вĕрентнĕ. 1881 çулта вăл Хусанта экстрен йĕркипе халăх учителĕн ятне илме экзамен тытнă. Ун хыççăн Д. Филимонов Çĕрпÿ, Чикме уесĕнчи чăваш шкулĕсенче ĕçлесе пурăннă, шкулсем уçнă. 1894 çулта вăл Чикме уесĕнчи Ишек салинче миссионерсен шкулне уçнă тата ертсе пынă. «Казанский телеграф» хаçатăн 1899 çулхи октябрĕн 13-мĕшĕнче тухнă номерĕнче Д. Ф. Филимонова «пултаруллă педагог тата писатель» тесе хакланă.

1899—1919 çулсенче Д. Ф. Филимонов Самар кĕпĕрнинчи Тăварăм ялĕнче (халĕ Самар облаçĕн Шунталĕ районĕ. — А. А). пупра ĕçлесе пурăннă, шкулта вĕрентнĕ, шкулсем уçнă. 1900 çулта ăна Самар кĕпĕрнинчи православи чиркĕвĕн куçару комисси председательне суйланă.

Д. Ф. Филимонов хăй те вырăсларан чăвашла нумай куçарнă. 1888 çулта вăл шкулта вулама «Вырăс халăх историйĕ çинчен» ятлă калавсен пуххин икĕ кĕнекине пичетлесе кăларнă. Унта вăл Карамзин, Державин, Пушкин, Тургенев произведенийĕсене чăвашла куçарнă сыпăкĕсене те кĕртнĕ. Д. Ф. Филимонов 1936 çулта 81 çула кайсан, Çĕрпÿ районĕнчи Ямаш ялĕнче вилнĕ.

Çырулăх тунă тапхăра аса илсе, каярахпа Д. Филимонов паллă чăваш историкĕ Н. В. Никольский патне 1906 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче янă çырăвĕнче акă мĕн çырнă: «Эпĕ хама тăван халăха çутта кăларас ĕç пуçламăшĕнче тăма тÿрĕ килнĕшĕн телейлĕ тесе шутлатăп. Эпĕ, кăшт çеç пулин те, И. Яковлевпа пĕрле малтанхи чăвашла букварь тума, малтанхи куçарусем тума хутшăнтăм. Эпир хамăр халăхăн культура шайне мĕн чухлĕ те пулин çÿлерех хăпартас тесе питех те тимлĕ, тăван халăха ырă сунса, уншăн тÿрĕ кăмăлпа ĕçлерĕмĕр. Ĕçлени хамăршăн çеç пултăр темен», — тенĕ.

Юлашкинчен çапла çирĕплетсе калăпăр: чăваш çырулăхĕн сăпки умĕнче тăван чĕлхене ăста пĕлекен хастар çынсен ушкăнĕ тăнă. Çĕнĕ чăваш çырулăхне тăвас шухăш чи малтан Н. И. Ильминский пуçĕнче çуралнă. Çав идейăна пурнăçлама ăна И. Я. Яковлев пек çивĕч ăслă, пултаруллă организатор кирлĕ пулнă. И. Я. Яковлев вара пĕтĕм ĕçе йĕркелесе, ертсе пыраканĕ пулнă. Уншăн вăл хăйĕн вĕренÿри вăхăтне те, укçи-тенкине те хĕрхенмен. И. Я. Яковлева çак пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçре унăн çывăх юлташĕсем, хăй пекех ĕçчен те тÿрĕ кăмăллă С. Н. Тимрясов тата малтанхи вĕренекенĕсем А. В. Рекеев, И. И. Иванов, Т. П. Петров, Д. Ф. Филимонов хастар пулăшса тăнă. Çавăншăн чăваш халăхĕ вĕсен ячĕсене ĕмĕрех асра тытĕ.

И. Яковлевпа унăн çывăх юлташсем тăрăшнипе тунă çĕнĕ çырулăх пĕлтерĕшĕ питех те пысăк: вăл пирĕн халăхăн вĕренÿпе культура шайне хăпартма пулăшрĕ, ăна тĕнче культурин аслă сулĕ çине тухма май пачĕ. Вĕсем революциччен тапхăртах çыруллă тăван культурăна аталантарас тесе, 50 çул хушши (1868—1918) ырми-канми ĕçлесе, (Хусанти кÿçару комиссийĕпе пĕрле) 700 ытла чăвашла кĕнеке пичетлесе кăларнă, илемлĕ чăваш литература чĕлхине йĕркелеме пултарнă. Вĕсен çак пархатарлă ĕçĕ — пирĕн паянхи çырулăхăн, илемлĕ литературăпа искусствăн тата наци шкулĕн çирĕп никĕсĕ.